Вĕрентӳ кунĕ

# Хастар вĕренекенсем пурри – маттур учительсен тӳпи



тĕлĕнчĕç шкул ачисем вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсем зала грамотăсем, дипломсем, парнесем йăтса кĕнине курсан. Чăнах та, уяв тăршшĕпех сцена çине пĕрин хыççăн тепри вĕренекенсем тĕрлĕ диплом-грамота илме хăпарчĕç. Раççей тата республика шайĕсенчи олимпиадăсен çĕнтерӳçисем, республика тата район шайĕсенчи тĕрлĕ конкурссен çĕнтерӳçисемпе призлă вырăнсене тухнисем, Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă конкурссен çĕнтерӳçисем, çамрăк космонавтсем, çамрăк журналистсем, çамрăк экологсем... – кам кăна çук-ши хастар ачасем хушшинче. Паллах, вĕсен вĕрентекенĕсен тӳпи пысăк çакăнта. Вĕрентекенĕсем те пултаруллă. Акă вĕсем хушшинче вăрçă тематикипе иртнĕ художесто пултарулăх конкурсĕн çĕнтерӳçисем те грамотăсемпе ятарлă парнесене тивĕçни çакнах кăтартса парать.

Хастар яш-кĕрĕме, вĕрентекенсене халалласа сцена çинчен илемлĕ юрăташă таталмарĕ.Çакă та районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче ачасене пур енлĕн аталанма условисем пурри-

Районти пур вĕренекен те çак куна чăтăмсăррăн кĕтрĕ пулĕ. Йышлăн пухăнчĕç шкул ачисемпе вĕрентекенсем майăн 19-мĕшĕнче иртнĕ Вĕрентӳ кунне. Шăпах çак кун кĕтнĕ грамотăсемпе дипломсем, парнесем ачасен аллине çитрĕç. Вĕсене шкулти линейкăра илни мар, пĕтĕм район умĕнче илни тем тесен те чыслăрах.

Уяв районти ача-пăчан обществăлла организацийĕсен фестивалĕпе питĕ хаваслăн пуçланчĕ. Паян çак организацисем тĕрлĕ енлĕн ĕçлесе, аталанса пыраççĕ, ӳсĕмсем тăваççĕ. Район пуçлăхĕ Ю.Иванов, район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова ачасене саламласа хастар та маттур пулма, шкул пурнăçĕпе хавхаланса çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тума чĕнсе каларĕç.

Учитель çулталăкне халалланă уяв кунĕнче савăнăçлă самантсенчен пĕри район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вĕренӳре «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыракансене стипендисем пани пулчĕ.

З.Ю. Дипломатова хастар волонтерсене ятарлă документ – волонтерăн кĕнекине – пачĕ. Вĕсем хушшинче пурте тенĕ пекех Чуманкассинчи вăтам шкултан пулчĕç. Çак çамрăксем малалла та ырă ĕçсем пурнăçласси иккĕлентерменнине тата ыттисен те волонтер кĕнекине илессишĕн тăрăшмаллине каларĕ Зоя Юрьевна.

Фестивале хутшăнакан шкул ачисен ĕçне пурĕ ултă секцире йĕркелерĕç кăçал. Ачасен пултарулăхĕпе тавçăрулăхне тĕрĕслеме, вĕсене обществăлла организацисем малтан мĕнле ĕçлениpе паллаштарма та май пачĕç вĕсем.

11 сехет çурăра савăнăçлă уяв район администрацийĕн ларусен залне куçрĕ. «Мĕн чухлĕ грамота!» – тесе



не кăтартса пачĕ. Кунĕпех савăк ларутăру хуçаланни вара ачасемпе вĕрентекенсене малашне те çирĕп утăмлă, хастар пулма çĕнĕ вăй хушрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: хастаррисене З. Дипломатова саламлать; Юнкăсен парне нумай пухăнчĕ.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Никольский пекех малта пыма тăрăшатпăр

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче Чăваш автономийĕн истрийĕ пирĕн районти паллă ентешсемпе С.М. Михайловпа (Яндушпа), Ф.Т. Тимофеевпа (Тимухха Хветĕрĕпе), Н.В. Никольскийпе уйрăлми тачă çыхăннине палăртрĕ. Вĕсем чăваш халăхĕн историйĕнче, çырулăхĕнче, литературинче тарăн йĕр хăварнă. Çавăн пекех Юрий Александрович Чăваш автономийĕ 90 çул тултарнă май район хаçатĕнче çакнашкал паллă ентешсем çинчен каласа паракан ятарлă ярăм уçмаллине, çав çынсем çинчен брошюрăсем кăларма сĕнӳсем пачĕ. Çакă çитĕнекен ăрушăн хамăр истори тĕлĕшĕнчен пысăк парне пулнă пулĕччĕ. Район хаçачĕн тĕп редакторĕпе А.И. Тихоновпа Е.Е. Ерагин таврапĕлӳçĕ ку шухăш вырăнлă тата пурнăçланмалласкерсем пулнипе килĕшнине пĕлтерчĕç.

«Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А. П. Леонтьев Н.В. Никольский тĕрлĕ тавракурăмлă çын пулнипе пĕрлех чăн-чăн энциклопедист пулнине, вăл чăваш халăх историне питĕ нумай тĕпченине палăртрĕ. Çавăн пекех вăл халăх медицинине те интересленнĕ, 200 чăваш халăх юррине нотăсем çине куçарнă. Çавăн пекех Алексей Петрович чăваш чĕлхине сыхласа хăварас ĕçре чăвашла çĕнĕ кĕнекесене тӳрех Интернета вырнаçтарса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулмаллине палăртрĕ. Н.В. Никольскин ĕçĕсен 4 томне кăларнă пулсан тата тепĕр 3 том тухмаллине, Шупашкарта Н.В. Никольские асăнса палăк лартма вăхăт çитнине асăнчĕ.

Унтан Никольский паркĕнче Николай Васильевичăн палăкĕ умне чĕрĕ чечек çыххисене хучĕç. Митинг пулчĕ. Ăна Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.И. Егоров уçрĕ.

– Пире паян çакăнта Н.В. Никольский пуçтарчĕ. Пирĕн унăн ĕçĕсене малалла тăсса пымалла. Хамăр район аталанăвĕшĕн, хамăр пурнăç тата та лайăхрах, тулăхрах пултăр тесе хамăрăн тăрăшмалла, – терĕ Юрий Александрович пуçтарăннисене Н.В. Никольскин çуралнă кунĕ ячĕпе саламланă май. Район историне тĕпчес, ăна пуянлатас ĕçре тăрăшса ĕçленĕшĕн И.В. Раевская (Шетмĕпуç шкулĕ), Н.М. Тюрина (Шурча шкулĕ), И.А. Каргин (Ильинка шкулĕ) таврапĕлӳçĕ учительсене тата М.М. Дмитриев ӳнерçĕ учителе (Çатракасси шкулĕ) хăй ятĕнчен Тав çырăвĕсем пачĕ.

Митинга пуçтарăннисене çавăн пекех «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев саламларĕ, Н.В. Никольский ячĕ чăннипех çӳле çĕкленнине палăртрĕ.

Ильич яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсем те Н.В. Никольский ятне чысăн çӳлтех тытса пыраççĕ: районта çирĕп хуçалăхсенчен пĕри ку хуçалăх.

– Малалла та тăрăшса ĕçлемелле пирĕн, – терĕ унăн ертӳçи И.В. Николаев.

Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче вĕренекенсем те Николай Васильевичпа мухтанаççĕ, ун пекех пур енĕпе те малта пыма тăрăшаççĕ. Шкул директорĕ И.П. Федотова каланă тăрăх республикăра, районта иртекен тĕрлĕ конкурссенче малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Палăк умĕнче ачасем Н.В. Никольский çинчен сăвăсем вуларĕç, Николай Васильевич çинчен çырнă «Тăван халăхшăн ун ĕçĕсем» (кĕвви Ю. Жуковăн, сăмахĕсем Л.Туктинан) юрра шăрантарса пачĕç.

Юлашкинчен паркри сцена çинче Васкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Талан» фольклор ушкăнĕ илемлĕ юрă-ташăпа савăнтарчĕ.

Калаcа хăвармалла, çак кун Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем 4 ушкăна пайланса ĕçлерĕç. Тепĕр виçĕ ушкăнĕ Ярапайкасси ял тăрăхĕнче, Каршлăхри ваттисемпе инвалидсен çуртĕнче пулчĕç, Юнкăпа Нискасси шкулĕсен коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

Ыйту – хурав

# «Дача амнистийĕн» ыйтăвĕсемпе

***Çынсен хăйсен куçман пурлăхне харпăрлăха куçарассипе палăртнă вăхăт пур-и? «Амнисти» хăçанччен пырĕ?***

– Çĕр участокĕсене тата вĕсем çинче вырнаçнă куçман пурлăх объекчĕсене (харпăр хăйсен гаражĕсем, ытти çуртйĕр) 2006 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса «дача амнистийĕн» саккунĕпе килĕшӳллĕн харпăрлăх правине çирĕплетеççĕ. Документсене хатĕрлесе парассипе юлашки вăхăта пăхса хуман.

Çĕр участокĕсем çинче харпăр хăйĕн пурăнмалли çуртйĕрне туса лартнисен тата туса лартакансен ансатлатнă йĕркепе документсене хатĕрлемелли йĕрке 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен пырать.

***Ансатлатнă мелпе пурăнмалли çурт-йĕре харпăрлăха куçарас тесен, мĕнле документсем кирлĕ пулаççĕ?***

– Чи малтанах – объект пуррине ĕнентерекен документ. Ку вăл объектăн БТИ органĕсем хатĕрлекен кадастр паспорчĕ. Кунпа пĕрлех çурт вырнаçнă çĕр участокĕ харпăрлăхра пулнине çирĕплетекен документ кирлĕ. Иккĕмĕшĕнчен, çурт вырнаçнă çĕр участокĕн кадастр паспорчĕ кирлĕ пулать. Енчен те çĕр участокĕн правине унччен регистраци службинче çирĕплетнĕ пулсан, çĕр участокĕн правине çирĕплетекен документ тата кадастр паспорчĕ кирлĕ пулмаççĕ. Çавăн пекех патшалăх пошлинине тӳлени пирки тӳлев документĕ, çын кам пулнине ĕнентерекен документ (паспорт) кирлĕ.

***«Дача амнистийĕ» çĕнĕрен илнĕ çĕр участокĕсене пырса тивет-и?***

– «Дача амнистийĕ» 2001 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕччен илнĕ çĕр участокĕсем тĕлĕшпе вăйра. Шăпах çавăн чухне Раççей Федерацийĕн Çĕр кодексĕ вăя кĕнĕ.

**Надежда ЯКОВЛЕВА,**
**Федераллă регистраци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн документсем парас-илес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**


Мегафон

# ОБЩЕНИЕ В ПОДАРОК




Месяц май для нашей семьи – не только открытие дачного сезона, но и хлопоты по подготовке ко дню рождения Наташиной мамы. Лидия Тимофеевна мировая теща, ее приезды к нам всегда праздник. А уж наши ответные визиты в домик на окраине Алатыря, на пироги да «фирменное» клубничное варенье – праздник вдвойне. Но смотреть, как жена носится по магазинам в поисках оригинального и практичного подарка, так и не находя ничего подходящего – сердце кровью обливается.

И ведь не поможешь ничем – все мои предложения были отвергнуты супругой как абсолютно неприемлемые.

Но в этот раз моя идея ей обязательно понравится. Да и сама Лидия Тимофеевна будет довольна. На днях в телефонном разговоре она посетовала, что на день рождения опять не сможет приехать старшая дочь Аня, которая с мужем-пограничником живет в Хабаровском крае. «Понятно, что это не ближний свет, но сколько уже дочка не приезжала в родительский дом, - сокрушалась теща. – Повидаться бы с ней, поговорить по душам…»

И тут меня осенило. Да ведь при нынешних телекоммуникационных технологиях это совсем нетрудно устроить. Достаточно подключиться к быстрому Интернету. Компьютер у Лидии Тимофеевны есть, обращаться с ним бывшая учительница математики умеет даже лучше некоторых школьников. Не хватает только высокоскоростного доступа в Интернет – тянуть кабель к ее дому слишком накладно.

И какая удача - компания «МегаФон» запускает в районах республики сеть третьего поколения, скорость передачи данных в которой достигает 7 Мб/с! Странички в Интернете открываются практически мгновенно. Надо только купить в ближайшем фирменном салоне оператора сотовой связи «МегаФон Модем-Плюс» – комплект, состоящий из МегаФон-модема, SIM-карты и специального тарифного плана. А специальное предложение для жителей райцентров – услуга «Интернет-регион» обеспечит безлимитный доступ во Всемирную паутину всего за 250 рублей в месяц! И тогда быстрый беспроводной доступ в Интернет вам обеспечен где угодно – дома, на улице, в дороге. Причем, чтобы начать работу в Интернете, пользователю не придется ничего устанавливать - все предварительные настройки для работы в сети уже есть на SIM-карте.

Итак, решено – покупаем МегаФон 3G модем! Тем более, что с его помощью Лидия Тимофеевна хоть каждый день общаться не только со старшей дочерью, но и с младшей, которая учится в Москве. А также с двумя своими сестрами, которые живут в Уфе и Казани. Все-таки хорошая это штука – передовые технологии. Они помогают близким людям не терять друг друга.

Приобрести комплект «МегаФон Модем-Плюс» и внести абонентскую плату можно в любой дилерской точке. Подробности – в офисах продаж и обслуживания, а также на сайте компании www.volga.megafon.ru.